(cc) BY



***Купцова Альбина Леонидовна***

воспитатель

МБДОУ «Д/С №72»

г. Чебоксары Чувашской Республики

# СКАЗКА КАК ОДИН ИЗ ВИДОВ РАБОТЫ В ДЕТСКОМ САДУ

***Аннотация***: *в статье через чувашскую сказку показано привитие дошкольникам детских садов любви ко всему чувашскому, чувашским обрядам и традициям. С этой целью чувашские сказки изучены с разных позиций. Подчеркивается, что для дошколят сказка и ее герои имеют большое значение.*

***Ключевые слова***: *сказка, чувашские традиции и обычаи, городской детский сад, режимный момент, театральный уголок.*

***Аннотаци***. статьяра ача сачĕсенче юмаха тĕпе хурса шкул çулне çитмен ачасене чăвашлăха, чăваш йăли-йĕркине юратма вĕрентни сăнланнă. Çав тĕллевпе чăваш юмахĕсене тĕрлĕ енлĕн тишкерсе тухнă. Пĕчĕккисемшĕн юмах, сăнарĕсем пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртнă.

***Тĕп сăмахсем***: юмах, чăваш йăли-йĕрки, ача сачĕ, режимлă самант, театр тĕпелĕ.

Чăваш халăх сăмахлăхĕ юмахсемпе пуян. Ачасем час-часах юмах-халап ярса пама ыйтаççĕ. Ача сачĕнче тăван халăх сăмахлăхĕпе, йăли-йĕркипе ачасене паллаштарасси, юратма вĕрентесси кашни воспитателĕн тивĕçĕ. Хулари ача сачĕнче ятарлă чăвашла вĕрентмелли сехетсем çук, анчах та ирĕклĕ вăхăт саманчĕпе усă курма май пур. Юмах-халап ача-пăчана ăс-хакăл пухма, ырă та тӳрĕ чунлă пулма, аслисене хисеплеме, çут çанталăка, тăван халăха, çĕр-шыва юратма, ырăпа усала уйăрма, урăхла каласан, пурнăç çине чĕрĕ куçпа пăхма вĕренме пулăшать. Апла пулсан, юмах ачашăн йăпанмалли япала кăна мар. Ача-пăча юмаха пурнăçпа çыхăнтарма хăтланать. Юмахра пулса иртекен ĕçсем чăн пулнă тесе ĕненет. Юмах-халапсем ача чун чĕрине чăннипех çавăрса илеççĕ, тыткăнлаççĕ. Ачасем юмахсен кашни сăмахне тимлĕ итлесе лараççĕ.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Ачасене ытларах чӗр чунсем ҫинчен ҫырнӑ юмахсем килӗшеҫҫӗ, сӑмахран: «Тилӗ тус» [4], «Мулкач тытма кайни», «Кашкӑрпа Путек», «Сармантей» [5], «Пакшапа Чакак» тата ыт. те [2; 3]. Ҫак юмахсем чӗр чунсене юратма хистеҫҫӗ. Юмах геройӗсем хӑюллӑ, ӗҫчен, тараватлӑ пулнипе ачасем савӑнаҫҫӗ. Воспитателӗн чӑваш тумтирне тӑхӑнса шкул ҫулне ҫитменнисене юмахсене тимлӗ, сасса улӑштарса, илемлӗ каласа е вуласа памалла, ачасене хайсене рольсемпе калаттарма тӑрӑшмалла. Ку е вӑл юмахпа ҫыхӑннӑ ӗҫсене сӑнлакан картинасене, иллюстрацисене ахальлӗн тата компьютерпа экран ҫинчен кӑтартма, юмаха аса илнӗ самантсенче ачасене хайсене килӗшекен геройсен ӳкерчӗкӗсене сӑрӑпа е кӑранташпа ӳкерттерме те май пур.

Ачасем юмахсенчи ырӑ та сӑпайлӑ, ӗҫчен те паттӑр ҫын сӑнарӗсемпе паллашма та хавас. Шкул ҫулне ҫитменнисем юмахри ырӑ ӗҫсемшӗн савӑнаҫҫӗ, кахал, усал, чӑркӑш, выҫкӑн геройсене юратмаҫҫӗ.

Пӗр-пӗр юмахпа паллаштариччен е паллаштарнӑ май ачасене сахал усӑ куракан сӑмахсене ӑнлантарса пама тӑрӑшмалла. Акӑ, сӑмахран, «Тилӗ тус» юмахра *хушпу* сӑмах тӗл пулать. Ачасене ҫак пуҫа тӑхӑнмалли япалана сӑмахпа чӑвашла е вырӑсла каласа ӑнлантарма пӗлмелле е тата ачасене чӑвашла тумлантарнӑ пуканене кӑтартма пулать. Ҫак юмахрах *тенкӗллӗ мӑй ҫыххи, сулӑ, кӗсле* сӑмахсене те ӑнлантарса пама тивет. «Пакшапа Чакак» юмахри *кӳршӗллӗ, ӗмӗтсӗр, хыт-кукар, перекетлӗ* самахсен пӗлтерешӗсене уҫса парсан аван пулмалла. Ҫак ӗҫре воспитателе тӗрлӗ словарьсем пулӑшу пама пултараҫҫӗ: чӑвашла-вырӑсла словарь, чӑвашла ӑнлантару словарӗ, синонимсен словарӗ тата ыт. те [1; 6].

Ирӗклӗ вӑхӑт саманчӗпе уса курса ачасене чӑн-чӑн юмахҫӑсемпе те паллаштарма май пур. «Кам-ха вӑл Кӗлпук Мучи?» – тесе ыйтсан, ачасем тӳрех хурав параймаҫҫӗ. Воспитатель ача сачӗнчи театр тӗпелӗпе усӑ курса: «Кӗлпук Мучи юптарать», – тесе калать те ҫак мучи кулӑшпа туслине палӑртать, К.В. Иванов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх академи драма театрӗнче чылай вӑхӑт (60 ҫул ытла) халӑха хӑйӗн пултарулӑхӗпе тӗлӗнтернӗ Чӑваш халӑх, Раҫҫей тава тивӗҫлӗ артисчӗ Ефим Никитин пулни ҫинчен пӗлтерет.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Театр тӗпелне Кӗлпук Мучи евӗр тумлантарнӑ пукане-старик тухса тӑрать те: «Эпӗ ку, Кӗлпук Мучи. Ҫитрӗм мар-и сирӗн пата юмах-халап юптарма. Сирӗн итлес килет-и?», – тесе юмах хыҫҫӑн юмах юптарма пуҫлать. Ҫапла майпа ачасем «Тилӗпе улатакка», «Икӗ шапа», «Тилӗпе автан» хайлавсемпе паллашаҫҫӗ [7–9].

Юмахсене итленӗ хыҫҫӑн шкул ҫулне ҫитмен ачасене тӗрлӗ кӗске ыйтусем пама тата вӗсене калаҫтарма пулать. Тӗслӗхрен: «Юмах килӗшрӗ-и?», «Тӗп геройсем камсем?», «Вӗсем хӑшӗ усал, хӑшӗ ырӑ?», «Тилӗ мӗнпе килӗшрӗ?», «Юмахри автан мӗн-мӗн тӑвать?»... Ыйтӑвӗсем пӗчӗк ачасене шухӑша яраҫҫӗ. Ыйту панӑ хыҫҫӑн ача-пӑчана шухӑшлама вӑхӑт памалла, тӳрех хуравне калатӑр тесе хистеме е пулӑшма васкамалла мар. Вӗсем хӑйсем тӗллӗн шухӑшлама вӗренччӗр. Ача тӗрӗс хуравласан ӑна ырламалла. Тӗрӗсех хуравлаймасан тепӗр ачаран ыйтмалла е хуравлама йывӑртарах чух воспитателӗн пулӑшма юрать. Пӗчӗкскер, пӗр сӑмахне е предложение аса илтерсен, малалла мӗн каламаллине хӑех ӑнкарса илет. Тепӗр меслет те пур: воспитатель ятарласа хатӗрленӗ ӳкерчӗксене ҫакса тухать те, ачасен унти сӑнарсем хӑш юмахран тата кам пулнине пӗлмелле.

Хула сачӗсенче чӑвашлӑха ҫухатас мар тесен ачасемпе чӑваш юмахӗсене вырӑсла куҫарнисемпе, вырӑс юмахӗсене чӑвашла куҫарнисемпе усӑ куратпӑр. Анчах та юмахӗсем вӑрӑм пулмалла мар. Шкул ҫулне ҫитменнисем вулама пӗлмеҫҫӗ-ха, итлеҫҫӗ кӑна. Вӗсене юмахсемпе тӗплӗнрех паллаштарас тесен воспитательсен е каласа, е вуласа, е выляса памалла. Ҫавӑнпа та юмаха лайӑх, интереслӗ калама е вулама, текстпа ӗҫленӗ чух ачасем ун тӗп шухӑшне ӑнланччӑр, геройсемпе вӗсен ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен шухӑшлаччӑр, хак паччӑр тесе тӑрӑшмалла. Ӑнлантарнӑ чух текстри хӑш-пӗр вырӑна пӗр е темиҫе хут та вулама тивет. Ун чухне чӗлхен кӗвӗлӗхпе илемлӗхне, ҫепӗҫлӗхне палӑртас тӗллевпе юмах текстне илемлӗ вулама, палӑртуллӑ сӑмахсемпе сӑмах ҫаврӑнӑшӗсене, танлаштарусене кӑтартма, паллама май пур таран вӗрентмелле. Воспитателӗн содержание калаттарнӑ чух ачасем пур сасса та, сӑмаха тӗрӗс, уҫӑмлӑ тата ӑнланмалла каланине яланах асӑрхаса тӑмалла.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Шкул çулне çитмен ачасем юмахсен хăйевĕрлĕхне уйăрса илме пултараççĕ, содержанине лайăххрах ăнланаççĕ. Çавăнпа та ыйтусем çине хăвăрт тата тĕрĕс хуравлама пултараççĕ. Тишкерӳ вăхăтĕнче аслăраххисем юмах содержанине, тĕп шухăшне, илемлĕх енĕсене тӳрременĕх ăнкарма, унти тĕп сăнарсене ас туса юлса театр тĕпелĕнче персонаж тумтирне тăхăнса выляса кăтартма пултараççĕ.

Ача сачĕсенче режимлă самантсенче ачасене чăваш юмах-халапĕ тăрăх тăван халăх культурипе, йăла-йĕркипе паллаштарни нимрен те хаклă. Хулари ача сачĕн шăпăрланĕ чăвашла пĕлменнине шута илсен юмаха чăвашла та, вырăсла та каласа пама май пур. Вĕт-шакăр кăмăлĕ ырри, сăпайли, ĕçченни тата паттăрри патне туртăнать. Çак паха енсем хăйсем сисмесĕрех яланлăхах чунне кĕрсе вырнаçаççĕ. Эппин, юмах тĕнчи пĕчĕккисемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ачасем пĕр юмахах темиçе хут итлеме те хавас. Кашни итлемессерен вĕсен тимлĕхĕ, хавхаланăвĕ, хумханăвĕ ӳсет, ача ытларах ăнланать, килĕшнĕ вырăнсене асра хăварать, юмахри геройсен сăнарĕсем, вĕсен ĕçĕсемпе хăтланкаларăшĕсем унăн куçĕ умне уçăмлăрах тухса тăраççĕ.

Ачасене ăс паракан воспитателĕн юмах-халап пĕчĕккисене ырă кăмăллă та сăпайлă, тӳрĕ чунлă та хăюллă пулса ӳсме, чăвашлăха аталантарма пулăшчăр тесе тăрăшмалла.

***Список литературы***

1. Андреев И.А. Русско-чувашский словарь / И.А. Андреев, Н.П. Петров. – М.: Русский язык, 1971.

2. Асанне юмахĕсем. РСФСР тава тивĕçлĕ артистки В.И. Голубева каласа панă юмахсем: кĕçĕн çулхи шкул ачисем валли / Г.А. Матвеева пухса хатĕрленĕ; художж. Е.В. Енькка. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2014. – 102 с.

3. В стране светлого дня: чувашские народные сказки. – Чебоксары: Чувашское книжное издательство, 1977. – 32 с.

4. Лиса-плясунья: сказки: для мл. шк. возраста. – М.: Дет. лит., 1990. – 62 с.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

5. Сармандей: чувашская народная сказка / С.И. Шуртакова // Чувашские легенды и сказки. – Чебоксары, 1979. – С. 33–35.

6. Скворцов М.И. Чувашско-русский словарь. – М.: Русский язык, 1982.

7. Чăваш халăх сăмахлăхĕ. I т. Юмахсем / Пухса хатĕрлекенĕ, ум сăмахпа ăнлантарусене çыраканĕ Сидорова Е.С. – Шупашкар, 1973.

8. Чăваш халăх сăмахлăхĕ. II т. Юмахсем / Пухса хатĕрлекенĕ, ум сăмахпа ăнлантарусене çыраканĕ Сидорова Е.С. – Шупашкар, 1976.

9. Чăваш халăх юмахĕсем. – Шупашкар: Чувашское книжное издательство, 1990. – 26 с.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)